Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

4 (8168) № ✻ Юн кун, 2014 çулхи кăрлач (январь) уйăхĕн 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

## Культура çулталăкĕ уçăлчĕ

Январĕн 17-мĕшĕнче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Чăваш Енре Культура çулталăкĕ уçăлнă май савăнăçлă мероприяти иртнĕ. Унта Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăннă, çулталăка ăнăçлă ирттерме суннă.

Театрăн иккĕмĕш хутĕнчи фойере отрасльти учрежденисем курав экспозицийĕсем хатĕрленĕ, республика Пуçлăхĕ, уява пынисем вĕсемпе кăсăкланса паллашнă. Ведомство тытăмĕнчи артистсем республика çыннисемпе хăнасене юрăкĕвĕпе саламланă.

**Сăмах май. Пирĕн районта Культура çулталăкне савăнăçлă лару-тăрура январĕн 31-мĕшĕнче уçма палăртнă. Ĕнер вара художество пултарулăх коллективĕсен «Чечеклен, юратнă Муркаш ен» конкурс фестивалĕ старт илчĕ. Ăна Муркаш районне йĕркеленĕренпе 70 çул çитнине халалланă. Сцена çине чи малтан Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн артисчĕсем тухрĕç.**

## Анатолий Аксаковпа тĕл пулнă

Январĕн 20-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игантьев Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин Финанс рынокĕ енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн çумĕпе Анатолий Аксаковпа тĕл пулнă.

Чăваш Енре экономика проекчĕсене пурнăçа кĕртес, çавăн пекех республикăра инфратытăм проекчĕсене ĕçе кĕртессин сферине Раççей Регион банкĕсен пĕрлĕхне явăçтарас, патшалăхпа уйрăм çын пĕрле тумалли мелсене аталантарас малашлăха сӳтсе явнă.

ЧР Информполитика министерствинче

## Республикăра 7 станци пулĕ

Чăваш Ен Информполитика министерстви хăйсен ĕçĕнче спутникпа çыхăннă геодези оборудованийĕпе усă куракан кадастр инженерĕсене, геодезистсене референцлă станцисен (РС) демонстраци сечĕсен майĕсене хаклама сĕнет.

2013 çулта Чăваш Ен Раççейăн пысăк тĕрĕслĕхлĕ ГЛОНАСС/GPS спутник сечĕпе çыхăннă регионсем çумне пĕрлешрĕ. Демонстраци сечĕ референцлă 3 станцирен тăрать. Вĕсене Шупашкар, Канаш тата Çĕмĕрле хулисенче вырнаçтарнă. Кунсăр пуçне станцисене Куславккара, Улатăрта, Етĕрнере тата Патăрьелте вырнаçтарĕç.

Референцлă станцисемпе усă курни çĕр участокĕсен, куçман пурлăх объекчĕсен чиккисене, координачĕсене тĕрĕсрех палăртма май парĕ. Референцлă станцисен демонстраци сечĕпе ĕçлеме мобильлĕ спутник приемникĕ (ровер) кирлĕ.

## 70 çул çитрĕ унтанпа

Ленинград хулине фашистсен блокадинчен ирĕке кăларнăранпа 70 çул çитнĕ май Пĕрремĕш канал нумай сериллĕ «Ладога – дорога жизни» фильм экран çине кăларать. Валерий Тодоровскийпе Александр Велединскийăн 4 серирен тăракан çĕнĕ фильмĕн пĕрремĕш серине январĕн 27-мĕшĕнче кăтартаççĕ.

# Ăшă кăмăлне шеллемеççĕ



***Кирек епле ĕç те хисепре. Вăл шутра çынсене пулăшасси, кирлĕ эмелпе тивĕçтересси, вăхăтлă сĕнӳ-канаш парасси те.***

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Ираида Скворцова фармацевтпа Зоя Краснова заведующи 5-шер çула яхăн ĕнтĕ Муркаш райповĕн хатĕр эмелсен аптекинче тăрăшаççĕ. Фармацевтикăри пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ вара вĕсен 27 тата 26 çул. Эмел туянма пыракансем вĕсен ĕçĕпе яланах кăмăллă. Чирлĕ çынна эмел кăна мар, ăшă кăмăл та сиплеме пулăшнине аван ăнланаççĕ хастар ĕçченсем.***

**В. ШАПОШНИКОВ** сăн ӳкерчĕкĕ.

Ял хуçалăхĕ

## Патшалăх пулăшăвĕ – тĕп вырăнта

Кăрлач уйăхĕн 15-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев Правительство çуртĕнче республикăри агропромышленноç комплексĕн ĕçченĕсемпе тĕл пулнă. Унта ЧР Министрсен Кабинечĕн председателĕпе министрсем, район администрацийĕсен пуçлăхĕсем, ял хуçалăх организацийĕсемпе продукци тирпейлекен промышленноç предприятийĕсен ертӳçисем хутшăннă.

Хăйĕн сăмахĕнче Михаил Игнатьев патшалăх ял хуçалăхĕ çине пысăк тимлĕх уйăрнине, вырăнсенче çакăнпа туллин усă курмаллине палăртнă. Патшалăх республикăри агропромышленноç комплексне 2013 çулта pană пулăшу 2,45 миллиард тенкĕпе танлашнă. Ку вăл унччENхи çулхинчен 19 процент пысăкрах. Çакна та палăртса хăвармалла. Чăваш Республики патшалăх пулăшăвне хресчен патне оперативлă çитерессипе Раççейри лайăх регионсем шутĕнче.

Республика Пуçлăхĕ сĕт тата аш-какай производстви çулталăкĕпех тăнăçлă тупăш панине, агробизнесра çак енсене ытларах аталантармаллине палăртса хăварнă. Ăна валли хуçалăхсенче фермăсене çĕнĕрен çĕклеме, пуррисене реконструкцилеме тĕллевсем лартнă.

ЧР агропромышленноç комплексĕн иртнĕ çулхи ĕçĕсен малтанхи пĕтĕмлетĕвĕпе тата 2014 çул валли йышăннă тĕллевсемпе ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов паллаштарнă. «АПК аталанăвĕ» приоритетлă наци проекчĕ ĕçлеме пуçланăранпа Чăваш Рспубликинче выльăх-чĕрлĕх усрамалли 177 фермăна çĕнĕрен тунă тата реконструкциленĕ. Вăл шутран иртнĕ çул – 23 объект.

**ЧР Пуçлăхĕн пресс-службы.**

Кĕскен

## Таксипе – электрон карттăпа

Чăваш Енре маршрутлă таксисемпе çӳренĕшĕн УЭК-па та, транспорт карттипе те тӳлеме май пур. Республикăра пурăнакансен кун пек май 2013 çулхи декабрьте пулса тăчĕ. Алăри укçасăр тӳлемелли терминалсене Çĕнĕ Шупашкарти 14-мĕшпе 20-мĕш маршрутсемпе çӳремелли маршрут таксисем çине тата хула тулашĕнчи 626, 265.1, 511э, 555, 112 тата 536 маршрут автобусĕсем çине вырнаçтарнă. Çакăн пирки пĕлтереççĕ чикĕллĕ яваплăхлă «Единая транспортная карта» обществăран.

Сăмах май январĕн 13-мĕшĕ тĕлне Чăваш Енре УЭК илме 14,3 пин çын заявлени çырса панă, 2,8 пин çын илнĕ.

## «Россия К» телеканалпа

Январĕн 12-мĕшĕнче «Россия К» телеканалпа «Россия, любовь моя!» программа кăтартрĕç. Ăна чăваш халăхĕн йăли-йĕркисене халалланă. Программа хăни филологи наукисен докторĕ, Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн наукăн кĕçĕн сотрудникĕ Николай Егоров пулчĕ.

Февралĕн 2-мĕшĕнче телеканалра тепĕр передача тухĕ. Унта вара чăвашсен çи-пуçĕпе тумтирĕсене кăтартĕç. Авалхи чăвашсен тумтир эрешĕсен хăйне евĕрлĕхĕсем çинчен Геннадий Иванов-Орков каласа парĕ.

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Пĕрремĕш ларура

Тунти кун, январĕн 20-мĕшĕнче, РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕ çумĕнчи обществăлла канаш членĕсем кăçалхи пĕрремĕш ларăвне ирттерчĕç. Маларах çирĕплетнĕ ĕç планне тепĕр хут тишкерсе йĕркелӳ саманчĕсене сӳтсе яврĕç. Лару вăхăтĕнче канаш членĕсем вăхăтлăх тытмалли изоляторти условисемпе паллашрĕç. Кунти пурăнмалли условисем, апатлану, йĕрке саккунпа килĕшсе тăнине палăртрĕç вĕсем.

Ларăва шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. Плечов та хутшăнчĕ. Вăл иртнĕ çулхи кăтартусемпе паллаштарчĕ, пайăн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ çинче чарăнса тăнă май пирĕн полицейскисем Чăваш Республики тăрăх РФ Шалти ĕçсен министерствин спартакиадин пĕтĕмлетĕвĕпе 3-мĕш вырăна тухнине пĕлтерчĕ. Кунсăр пуçне çак кунсенче Е. Плечова Чăваш Республики тăрăх федерацин тĕп инспекторĕ Г. Федоров саккунлăхпа йĕркелĕхе çирĕплетессине пысăк тӳпе хывнăшăн Тав çырăвĕ парса чысланă.

## Тимлĕх – тĕрлĕ енлĕ

Хĕрарăмсен районти канашĕ тата нумаях пулмасть йĕркеленнĕ тепĕр обществăлла пĕрлешӳ – ашшĕсен районти канашĕ çак кунсенче хăйсен ĕç планне çирĕплетрĕç. Районти йывăр лару-тăрулла çемьесене пулăшасси, ачасене хӳтлĕхпе тивĕçтересси, тĕрлĕ ӳсĕмри çынсене обществăлла пурнăçа активлăрах явăçтарасси тата ытти ыйтусемпе ĕçлеме хатĕррине палăртрĕç канашсен членĕсем. Хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи Л. Тарасова каланă тăрăх çакăнпа пĕрлех вĕсем вырăнсенчи хĕрарăмсен канашĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çине тата мероприятисене тĕрлĕ интереслĕ формăпа ирттересси çине пысăкрах тимлĕх уйăрма тивĕç.

## Кубок – кил хуçисенче

Кăçалхипе вун саккăрмĕш хут «Оринино» хуçалăхăн кубокне çĕнсе илекенсем пĕрле пухăнчĕç. Ырă йăлана кĕнĕ ăмăртура январĕн 18-мĕшĕнче 10 команда вăй виçнĕ.

Ăмăртăва хутшăнакансем яланхи пекех шашка тата шахмат вăййисенче, волейболра вăй виçнĕ. Спортăн кашни енне уйрăм пĕтĕмлетнĕ. Кăтартусен пĕрлештерĕвĕ вара Орининсем мала тухнине çирĕплетсе панă.Иккĕмĕш вырăнта Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулăн команди, виççĕмĕшĕнче – Нискассинчи вăтам шкулăн команди.

**Н. НИКОЛАЕВА** хатĕрленĕ.

Курав

## «Çĕр улми» уявĕ

Февралĕн 20 – 21-мĕшĕсенче Шупашкарти Николаев космонавт урамĕнчи суту-илӳ комплексĕнче регионсем хушшинчи «Çĕр улми – 2014» курав иртет. Кăçал унăн программи пуян та анлă. Унта хутшăнакансемшĕн çеç мар, курма пыракансемшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ вăл. Экспозицисенче çынсем чикĕлеш енчи тата хамăр çĕр-шыври селекционерсем туса кăларакан çĕр улмин вун-вун сорчĕпе, вĕсен уйрăмлăхĕсемпе çывăхрах паллашĕç.

Шупашкара курава килесси çинчен хальлĕхе Раççейăн 13 регионĕнчен 40 ытла предприяти пĕлтернĕ. Вĕсем – Мускавпа Санкт-Петербург хулисем, Липецк, Мускав, Чул хула, Самар, Свердловск облаçĕсем, Тутар Республики тата ытти регионсем. Ахăртнех пирĕн районти «иккĕмĕш çăкăр» ăстисем те уява хутшăнма кăмăл тăвĕç?

## Электрон хутшăнăвĕ меллĕрех

Чăваш Енри вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем 2013 çулхи декабрь уйăхĕнче ведомствăсем хушшинчи электрон хутшăнăвĕн системи (СМЭВ) урлă 3,7 пин ытла ыйтăм ярса панă. Ку вăл пĕтĕм ыйтăмсен 77 процентне яхăн. 2013 çулта вара республикăри ĕç тăвакан тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем федераци органĕсене 94 пин ытла ыйтăм ярса панă. Кун пирки январĕн 16-мĕшĕнче Чăваш Ен Информполитика министерствин информаци технологийĕсене ĕçе кĕртекен пайĕн пуçлăхĕ Ирина Никонорова СМЭВ енĕпе ирттернĕ вĕренӳ семинарĕнче пĕлтернĕ. Унта хуласемпе районсен администрацийĕсен пуçлăхĕсен çумĕсем, СМЭВ енĕпе ответлисем хутшăннă.

Аса илтеретпĕр. 2012 çулхи июль уйăхĕнчен тытăнса ытти органсенче пур сведенисене влаç органĕсен çынсенчен ыйтмалла мар. Ку информацие регион, федераци тата вырăнти влаç органĕсен пĕр-пĕринчен СМЭВ-па усă курса ыйтса илмелле.

Çырăнтару – 2014

**Хаклă çыннăм! Эсĕ район хаçатне кăçалхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнма манман-и? Аса илтеретпĕр: ăна февраль уйăхĕнчен илсе тăма та çырăнма май пур. Малашне те пĕрле пуласчĕ!**

**Райхаçат редакцийĕ.**

**Чăваш Республикинчи ачасен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен уполномоченнăй В.В. Рафинов района килсе кайнă хыççăнхи шухăшсем**

# Куççуль çĕре ӳкмест, теççĕ: çынна усал тăвас марччĕ...

Иртнĕ шăмат кун пирĕн районта Чăваш Республикинчи ачасен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен уполномоченнăй В.В. Рафинов пулчĕ. Район администрацийĕнче иртнĕ канашлура çулталăка çитмен ачасем вилнин, ашшĕ-амăшĕ пур çĕртех ачасем тăлăха тăрса юлнин сăлтавĕсене сӳтсе яврĕç. Тăлăх ачасен, нумай ачаллă çемьесен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатассипе, çул çитмен çамрăксем хутшăннипе тунă преступленисен йышне чакарассипе, унта ачасен пушă вăхăтне усăллă ирттерессипе çыхăннă ытти ыйтусене сӳтсе яврĕç.

– Пирĕн тĕллев – пĕр ачана та ача çуртне ямалла мар. Муркаш районĕнче кăçал сахалтан та педагог профессине илнĕ 3–4 çын çемйинче ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр тăрса юлнă ачасене пурăнма илессине йĕркелессе шанас килет, – терĕ Чăваш Республикинчи ачасен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен уполномоченнăй В.В. Рафинов. Вячеслав Викторович çавăн пекех ачасене çемьене пурăнма илекенсене патшалăх ĕç укçи тӳленипе пĕрлех çав ачасене пăхнă вăхăт пĕтĕмĕшле ĕç стажне кĕнине палăртрĕ. Чăннипех те, вăл калашле, педагог профессине илнĕ, хăйсен ачисене пурнăç çулĕ çине кăларнă учительсемпе воспитательсен кунта шухăшласа пăхмалăх пур. Çавăн пекех вăл е ку сăлтава пула юратнă ĕçсĕр тăрса юлнă педагогсен те.

Кунта В.В. Рафинов каланă тепĕр шухăшпа та килĕшмесĕр тăма çук. Ачасемшĕн тăван килте, тăван атте-аннепе пĕрле вĕсен юратăвне туйса çитĕннинчен хакли мĕн пултăр? Кирлĕ чух атте-анне ятлани-хăтăрса илни те телей вăл. Çапла майпа пире тӳрĕ çултан пăрăнасран сыхлаççĕ. Вăхăтра каланă тĕрĕс сăмаха мĕн çитет-ши пурнăçра? Анчах та тепĕр чух хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ вăхăтра тĕрĕс пĕтĕмлетӳ туманни вара инкек патне илсе пыни çинчен темшĕн шутламастпăр.

Шел, пур ашшĕ-амăш патне те пырса тивмест иккен çак шухăш. Çак сăлтава пулах ĕнтĕ кăçал пирĕн районта пурĕ 18 çула çитичченхи 13 ача вилни те тарăннăн шухăшлаттарать. Вĕсенчен 7-шĕ вара – çулталăка та çитмен.

В.В. Рафинов район администрацийĕн пуçлăхĕпе Р.Н. Тимофеевпа ирттернĕ канашлура тепĕр хут тарăннăн тишкерчĕç çак ыйтăва та. Çӳлте асăннă тĕслĕхсенчен 4-шĕ пирĕн район тулашĕнче пулса иртнĕ. Вăл ăçта пулса иртнинче (паллах, пирĕн район çине япăх витĕм кӳрсен те) мар кунта ĕçĕ-пуçĕ, пурăнас ачасем вăхăтсăр пурнăçран уйрăлнинче. Шел пулин те, вĕсенчен ытларахăшĕнче инкек сăлтавĕ ашшĕ-амăшĕ хăйсен тивĕçĕсенчен ытларах эрех черккине, ирĕк пурнăçа мала хунинче пулĕ. Çулталăка çитичченхи 7 ачаран 3-шĕн пурнăçĕ шăпах ашшĕ-амăшĕ пăхса çитерейменнипе татăлнă. Иккĕшĕ килте ĕçкĕ-çикĕ тунă хыççăн ирпе вăранайман. Тепринче вара ачана вăхăтра медицина учрежденине илсе килмен. Е тата пĕтĕмĕшле 13 ачаран пĕр сăлтавне илер. Амăшĕ чуна килĕшмелле вăхăт ирттернĕ хушăра ачи шывра путнине те сисмен...

Мĕн айăплă кунта? Каллех – эрех. Каллех сăлтавĕ хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ эрехе ачисенчен маларах хунинче.

Çак сăлтава пулах ашшĕ-амăшĕ сывă çĕртех ачасем вĕсен ăшшисĕр юлаççĕ. Иртнĕ çул кăна 9 çемьери (10 ашшĕне е амăшне) 11 ача тĕлĕшпе ашшĕ-амăш прависĕр хăварнă. Виçĕм çул вара ку инкек 3 çемьери 5 ачана кăна пырса тивнĕччĕ. Пĕлтĕрпе виçĕм çул вара пĕрер ашшĕ-амăш хăйсен йăнăшне туйса илнĕ. Çав правасене каялла тавăрнă. Нумайрах пулинччĕç çакăн пек тĕслĕхсем.

Эрех ĕçмесен килте те йăлтах йĕркеллĕ пулать, ачасем те выçă лармаççĕ, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те пĕр-пĕрне тӳпкемеççĕ, полицине лекмеççĕ.

Мĕн тумалла? Паллах, эрех ĕçме пăрахтармалла!!!

Мĕнле майпа? Вăт кунта шухăшламалăх пур.

Чи малтан, пирĕн пурин те çын пулмалла. Чунлăха çухатмалла мар, çав шутра аптека тытакан предпринимательсен те. Ытларах паян, район администрацийĕн пуçлăхĕ Р.Н. Тимофеев канашлура палăртнă пек, уйрăм çын аптекисенче илнĕ «фанфуриксене» ĕçеççĕ. Ку ыйтупа район администрацийĕ пĕлтĕр республикăна çырупа тухрĕ. Ун хыççăн почта уйрăмĕсенче çав шĕвеке сутма пăрахрĕç. Усси пулчĕ. Обществăлла канаш ларăвĕнче, право йĕркине пăсакансемпе кĕрешекен комисси ларăвĕнче, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашлăвĕнче те пăхса тухнăччĕ ку ыйтăва. Унпа сутă тăвакансене çемье интересĕсене, чунлăх ыйтăвĕсене мала хурса, вĕсене сутма пăрахма чĕнсе каланăччĕ. Муркашри 13-мĕш номерлĕ аптека та, Муркаш райповĕ те сутмасть вĕт-ха вĕсене. Çав хушăра аптека тытакан уйрăм çынсем хăнк! та тумарĕç ку енĕпе. Паян кун та чĕтрекен аллисемпе шĕвек ятне каламасăрах «мана 5», «мана 15» тесен, шăкăр-шăкăр кăларса лартаççĕ çав пĕчĕк кĕленчесене туянакан умне аптека ĕçченĕсем.

Саккун тĕлĕшĕнчен вĕсем йĕркене пăсаççĕ теме çук. Анчах та мораль тĕлĕшĕнчен... Паян вара малта вĕсемшĕн пысăк укçа хаклăрах пулĕ çав. Урайĕнче йăваланакан çамрăк хĕрарăм, унăн пĕчĕк ачи килте выçă ларни те вĕсемшĕн нимĕн те мар пуль. Вĕсен ачи выçă лармасть-çке. Вĕсен тăванĕ ӳсĕр йăваланмасть-çке. Çавăнпа та тĕрĕсех калать район администрацийĕн пуçлăхĕ Р.Н. Тимофеев çав шĕвеке сутма чаракан саккун кирлĕ тесе. Республикăри ачасен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй ку енĕпе республикăри Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствине тухма шантарчĕ.

Эрехпе кĕрешессинче вара район администрацийĕн пуçлăхĕн Р.Н. Тимофеевăн тепĕр шухăшĕпе те килĕшес килет. Малтанхи пек ирĕксĕрлесе эрех ĕçессинчен сиплеме пуçлани вырăнлă пулмалла.

Республикăран килнĕ представитель ĕçекенсене эрех магазинта сутманни те вырăнлине палăртрĕ те-ха. Анчах та тепĕр чухне сутуçăсем ĕçекенсене «хура списока» кĕртсех, укçине кайран памалла укçасăрах эрех парса яни те пулать вĕт. Районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов ларура палăртнă тăрăх çынсем ыйтнипе хăйĕн ку ыйтупа пĕрре кăна мар райпона тухса çав сутуçăсене çак сиенлĕ йăларан сивĕтме тивнĕ иккен.

Çын çинчи шыв çине сенĕкпе çырни тесе ахальтен каламаççĕ иккен. Утă вăхăтĕнче аптекăран сумки-сумкипе «фанфуриксем» илсе вĕсенчи шĕвеке шывпа хутăштарса кӳршĕсене хăналакансен те çакăн çинчен шутласа пăхмаллаччĕ: çав шĕвеке ĕçсе «хĕреслĕ яла» каякансен хушшинче ăнсăртран хăйсене çывăх çын та пулма пултарать вĕт. Çав ĕçекен çамрăк хĕрарăмсемпе арçынсем хушшинче хăйсен çитĕннĕ хĕрĕ-ывăлĕ пулас пулсан, çав шĕвеке çынсене ĕçтернĕ пулĕччĕç-ши, сутнă пулĕччĕç-ши? Иккĕленмелле. Тĕрĕсех калаççĕ хăйсен Çырăвĕсенче Раççей Президенчĕпе В.Путинпа республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев, çынсен мораль тĕлĕшĕнчен таса пулассипе ытларах ĕçлемелле, ыр кăмăллăха, чунлăха мала кăлармалла, тесе.

Халăхра çакăн пек каларăш пур: «Çын куççулĕ çĕре ӳкмест». Çынна усал туни паян мар пулсан – ыран, ыран мар пулсан – çулталăкран е хăçан та пулсан каялла усалпах таврăнать. Пурнăç çирĕплетсе панă тĕрĕслĕх, чăнлăх çакă. Вуншар тĕслĕх илсе кăтартма пулать кун пеккине. Çавăнпа та çынна усал туса чуна варалас марччĕ. Ашшĕ-амăшĕ тунă усал ĕçшĕн вĕсен ачисен явап тытмалла ан пултăрччĕ пурнăçра.

Çакна асра тытасчĕ усал шĕвекпе кӳршĕаршăна, пĕр ялта пурăнакансене «шăваракансен». Укçа тăвас тесе çынна инкек енне тĕксе яракансен.

Телее, пурнăçра ырă çынсем нумайрах. Акă районта 18 ачана 14 çемьене усрама илнĕ. Тепĕр 60 ача опекунсен çемйинче ашшĕ-амăш ăшшине тупнă. Пур вĕт-ха çынсене чăннипех те ырă, телей сунакансем. Акă камсем пек пулмалла пирĕн. В.В. Рафинов çакăн пек ырă çынсем çинчен те, инкек патне илсе пыракан эрех-сăра сиенĕ çинчен те, обществăлла ыр кăмăллăрах пулма чĕнекен материалсем радиопа хаçат страницисенче тăтăшах пулмаллине палăртрĕ.

Эрех-сăрапа иртĕхекенсемпе кĕрешессипе районта профилактика кунĕсене те ирттереççĕ. Иртнĕ çул вĕçĕнче тата ялти активăн тăтăшах ялсенчи ăнăççăр çемьесенче пулмаллине палăртнăччĕ. Ялта намăс-симĕс туйăмĕ çухалман вĕт-ха. Кӳршĕ е пĕр ялта пурăнакан урăх çын каланă сăмах тепĕр чух тĕрĕс çултан пăрăнасран çăлса хăварма пултарать. Илтме çеç пĕлесчĕ ăна. Чунпа та, ĕçпе те каялла ачисем патне таврăнма вăй тупасчĕ эрех черкки енне сулăнма пуçланисен те, унтах пурăнма шутланисен те. Ыттисен вара кӳршĕ арçынни ӳсĕр килнинчен е юнашар пурăнакан çамрăк хĕрарăм урамра ӳсĕр сулланса утнишĕн савăнас марччĕ. Çав хушăра хăв пысăк пулăшу параймасан та, ах, ман пата çак инкек ан килтĕрччĕ тесе те пулин çын инкекĕшĕн савăнас марччĕ. Сахалтан та, савăнас марччĕ çын хуйхишĕн. Инкек алăк уçнă çемьене пулăшма тесе мĕн те пулин тусан тата та лайăхрахчĕ.

**Л. ТУКТИНА.**

# Саккун ответлăха çирĕплетрĕ

**Йĕркелĕх**

2013 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕнче йышăннă 365 номерлĕ «О внесении изменений в отдельные акты Российской Федерации в связи с усилением уголовной и административной ответственности за нарушения в сфере производства и оборота этилового спирта и спиртосодержащей продукции» федераллă саккун кăçалхи январĕн 3-мĕшĕнче вăя кĕчĕ.

Çак саккунпа этил спирчĕ, алкоголь продукцийĕ тата спирт пур шĕвеке туса кăларассинчи тата ăна çаврăнăша кĕртессинчи йĕркене пăснăшăн административлă ответлăха çирĕпрех тăвать. Саккун асăннă йĕркене пăснăшăн ответ тыттарас тĕлĕшпе палăртнă тапхăра та пысăклатать. Çапла вара РФ административлă правăсен нормисене пăснин кодексĕнче палăртнă йĕркесене пăснăшăн маларах палăртнă штрафсем те ӳсрĕç.

Алкоголь тата спирт пур шĕвеке ĕçме çул çитмен çамрăксене явăçтарнăшăн (маларах – сăра, çавăн йышши ытти напитоксене, спирт напитокĕсене ĕçме çул çитмен çамрăка явăçтарнăшăн), çавăн пекех алкоголь тата спирт пур продукципе ваккăн суту-илӳ тăвассинчи ытти йĕркесене пăснăшăн паракан штраф виçисем ӳсрĕç.

РФ КоАпĕн 20.20 статйи – алкоголь продукцийĕпе чарнă вырăнсенче усă курни (ĕçни) е наркотик тата психотроплă хутăшсемпе обществăлла вырăнсенче усă курни – çинче тĕплĕнрех чарăнар-ха. Статья виçĕ пайран тăрать.

Пĕрремĕш пайĕпе – чарнă вырăнсенче алкоголь продукцийĕпе усă курнăшăн (ĕçнĕшĕн) федераллă саккунпа 500 тенкĕрен пуçласа 1500 тенкĕ таран штраф палăртса хунă.

Иккĕмĕшĕпе – урамра, стадионсенче, скверсенче, парксенче, обществăлла транспортра, ытти обществăлла вырăнсенче врач йышăнма ирĕк памасăр наркотик е психотроплă хутăшсемпе усă курнăшăн е пуçа минретекен ытти хутăшсемпе усă курнăшăн – 4000–5000 тенкĕ чухлĕ штраф пама е 15 талăклăх административлă арест çирĕплетме юрать.

Виççĕмĕшĕпе – иккĕмĕш пайра палăртнă ĕç-пуçа ют çĕр-шыв гражданĕсем е гражданлăха палăртман çынсем тунă пулсан – 4000–5000 тенкĕ чухлĕ штраф парса гражданина Раççей Федерацийĕн тулашне каялла кăларса яма ирĕк пур е 15 талăклăх арестленипе пĕрле Раççей Федерацийĕн тулашне каялла кăларса ярассине пăхса хунă.

Çапла вара обществăлла вырăнсенче ӳсĕр пулакансен малашне 500 –1500 тенкĕ кăларса хума тивĕ.

Кодексри 20.22 статьяна та çĕнĕлле çырнă, малашне ăна акă мĕнле вуламалла: «Çул çитменнисем ӳсĕр пулни, вĕсем алкоголь продукцийĕпе тата спирт пур шĕвекпе усă курни (ĕçни) е вĕсем наркотик тата психотроплă хутăшсемпе усă курни».

Вун ултă çул тултарман çамрăксем обществăлла вырăнта ӳсĕр пулсан е унта алкоголь продукцийĕпе, е спирт пур шĕвекпе усă кураççĕ (ĕçеççĕ) пулсан е тата врач çирĕплетĕвĕсĕр наркотик е психотроплă хутăшсене, пуçа минретекен ытти хутăшсене йышăнаççĕ пулсан административлă штрафа ашшĕ-амăшне параççĕ. Çапла вара аслисем, ачисем çак йĕркесене пăснă пулсан, 1000–2000 тенкĕ кăларса хурĕç.

2013 çулхи 376 номерлĕ «О внесении изменений в отдельные законодательные акты Российской Федерации» федераллă саккун та кăçалхи январĕн 3-мĕшĕнче вăя кĕчĕ. Вăл граждансене пурăнмалли вырăнта регистрацилессипе тата унпа çыхăннă ытти ыйтусемпе çыхăннă. Кун пирки хаçатăн çитес номерĕнче тĕплĕнрех паллаштарăпăр.

**В. ГРИГОРЬЕВ,**
**РФ Шалти ĕççен министерствин районти пайĕн полици пуçлăхĕн обществăлла йĕркене сыхлассипе ĕçлекен çумĕ.**

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*



Пирĕн юратнă юлташăмăр, кума – Муркаш ялĕнче пурăнакан **Алевтина Григорьевна УГЛЕВА** январĕн 22-мĕшĕнче 50 çулхи юбилейне паллă тăвать. Эпир ăна çак хисеплĕ кун ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Сывлăхусан çирĕп пултăр, утас çулу яланах такăр пултăр, ĕмĕрӳ вăрăм килтĕр. Тавах сана ырă кăмăлушăн. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: Мясниковсен, Николаевсен, Илларионовсен çемйисем.**

**Статистика**

# Бензин мĕн хак?

Чăвашстат даннăйĕсем тăрăх Атăлçи федераци округĕнчи регионсемпе танлаштарсан Чăваш Республикинче нефть продукчĕсен хакĕсем ытлашши пысăк мар.

Дизель топливин пĕр литрĕ 32,63 тенкĕ тăрать. Ку вăл 3-мĕш вырăн. Çакă Оренбург облаçĕнчи чи пысăк хакран (33,69 тенкĕ) 3,1 процент каярах. Чи пĕчĕк хак Мари Республикинче – пĕр литршăн 32,44 тенкĕ.

АИ-92 (АИ-93) маркăллă бензин 28,94 тенкĕ тăрать (4-мĕш вырăн). Ку вăл Пермь крайĕнчи чи пысăк хакран (29,37 тенкĕ) 1,5 процент каярах. Чи йӳнни Тутар Республикинче – 28,49 тенкĕ.

А-76 (АИ-80) бензин 27 тенкĕ тăрать. Ку вăл округра 5-мĕш вырăн. Киров облаçĕнче ку маркăллă бензин чи хакли – 29,0 тенкĕ е Чăваш Республикинчинчен 7,4 процент хаклăрах. Бензин хакĕ нефть кăларакан Тутар Республикин шайĕнчех. Чăваш Республикипе танлаштарсан нефть продукчĕсем туса хатĕрлекен Чул хула облаçĕнче асăннă бензин 2,1 процент (0,57 тенкĕ), нефть кăларакан Пушкăрт Республикинче 3,0 процент (0,8 тенкĕ) пысăкрах.

АИ-95 маркăллă бензин хакĕ пирĕн республикăра округрипе пĕр шайрах. Чăваш Енре унăн пĕр литрĕ 32,13 тенкĕ, Атăлçи федераци округĕпе 32,19 тенкĕ. Пушкăрт Республикинче АИ-95 бензин 1,7 процент е 0,55 тенкĕ хаклăрах.

**Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министерстви.**

**Культура çулталăкĕ**

# Савăнăç кӳреççĕ, тăванлăха упраççĕ

Нумаях пулмасть Чуманкасси ял тăрăхĕнчи МБУКăн Анаткас Апашри клубĕнче Çурлатри клубĕ çумĕнче йĕркеленĕ «Сеспель» ансамбль пысăк шайри кану каçĕ йĕркелесе пачĕ. Куракансене вĕсем илемлĕ тĕрлĕ юрăкĕвĕпе савăнтарчĕç. Палăртса хăварас килет, асăннă ушкăн Аксендаровсен йăхĕнчен тухнă пултаруллă артистсене пĕрлештерет. Вĕсем пирĕн сцена çине тухсан залри халăх хавасланса-чĕрĕлсе кайрĕ, кунта кичеммĕн ларма майĕ те çук. Çавăнпа та залрипе сцена çинчи йыш пĕрлехи юрă-ташă юхăмне лекрĕ. Çакă, паллах, чи малтан пирĕн хăнасен ăсталăхĕнчен килет, Анаткас Апашра пурăнакансем те ку тĕлĕшри пысăк ăсталăхпа палăраççĕ.

Районти паллă ансамбле Раиса Аксендарова пуçласа ура çине тăратнă, унăн ертӳçи – Алена Аксендарова, кунти ĕç-хĕле йĕркелекенĕ – Лариса Аксендарова. Наталья Крючковăпа Алена Николаева вара илемлĕ тĕрлĕ ташăпа савăнтарчĕç. Чăннипех те пултаруллă ăстаçăсенчен пирĕн те вĕренмелли чылай пулчĕ. Пĕр-пĕринпе хутшăнни çак енĕпе паха вĕт. Çавăн пекех вĕсен илемлĕ тĕрлĕ тум пулнине те пăхма питĕ кăмăллă, çакăнта чăвашлăх та аван курăнать. Куракансем вĕсен ăсталăхне питĕ кăмăлланипе тепĕр хут та тĕл пулма ыйтрĕç. Çапла вара черетлĕ концерт Исетеркке ялĕнче пулĕ.

Вĕсен пултарулăхĕ тепĕр енĕпе те паха. Артистсем пĕр йăхран тухнине çӳлерех асăнтăм ĕнтĕ. Апла пулсан вĕсем куракана тăванлăха хаклама, чăваш халăх йăли-йĕркине пĕлме-упрама вĕрентеççĕ. Кăçал Культура çулталăкĕ пуçланчĕ, çавăнпа та çак пахалăхсем ытти чухнехинчен те малта кирлĕ. Пултаруллă ушкăна йĕркеленĕренпе вара мартра вунă çул çитет. Апла пулсан хисеплĕ артистсемпе тĕл пулма васкар.

«Сеспель» ансамблĕн ăстисем, тавах сире чун киленĕвĕ валли те вăхăт тупнăшăн, хăвăрăн ĕçĕре кăмăл-туйăм хушнă пек пурнăçланăшăн. Çемйĕрсенче, тус-юлташусем хушшинче килĕшӳпе юрату, тату пурнăç пултăр.

**А. СЕМЕНОВА,**
**Анаткас Апаш клубĕн ертӳçи.**

Пирӗн ҫарсене Афганистанран кӑларнӑранпа – 25 ҫул

# «Тревога ҫук, кӗместпӗр тек ҫапӑҫӑва...»



Истори аталанӑвӗнче пӗр пулӑм тепринчен катара тӑрса юлаймасть. Муркаш ен те Раҫҫей кун-ҫулӗпе тачӑ ҫыхӑнура. Район юбилейӗ ҫывхарнӑ май пирӗн ҫарсене Афганистан ҫӗр-шывӗнчи хирӗҫтӑруран кӑларнӑранпа 25 ҫул ҫитни те – обществӑшӑн пӗлтерӗшлӗ вӑхӑт. Афганистан Республикинче 10 ҫул пынӑ вӑрҫӑ пирӗн районшӑн та йӗр хӑвармасӑр иртмерӗ. Ҫӗр-шыв интересӗсене хӳтӗлеме унта хутшӑннӑ пирӗн 7 ентеш тӑван киле чӗрӗ-сывӑ таврӑнаймарӗ. Вӗсем: М. Самойлов, А. Татаров, Н. Перцев, Ю. Тарасов, А. Порфирьев, Н. Михеев, В. Николаев. Ҫулсем иртнӗ май ҫак вӑхӑт историе тарӑнрах та тарӑнрах юлса пырать. Анчах сӑртлӑ-туллӑ ҫӗр-шыври ҫар операцийӗсене хутшӑннисем пирӗн хушӑмӑрта пурӑннӑ чух вӗсен кашнин кунҫулне пӗлме тивӗҫлӗ эпир. Ҫакӑн никӗсӗ ҫинче ҫамрӑк ӑрӑва патриотла воспитани парса пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларасси – общество тӗллевӗ. Совет салтакӗсене кӳршӗллӗ ҫӗр-шыври вӑрҫӑран кӑларнӑранпа чӗрӗк ӗмӗр ҫитнӗ май яшсен черетлӗ ушкӑнӗ кӑҫал ҫуркунне арҫын тивӗҫне пурнӑҫласа ҫар ретне тӑма хатӗрленет... Вӗсен те тин ҫуралакан ачасем таса та сывӑ ӳсчӗр, ашшӗ-амӑшӗсем тулли хӑватпа ӗҫлеччӗр, аслӑ ӑрурисем таса-сывӑ пурӑнччӑр тесе ҫӗр-шыв умӗнчи тивӗҫе туллин пурнӑҫлама сӑмах памалла. Ахальлӗн...

– Афганистанри вӑрҫӑна вунӑ ҫул хутшӑннӑ ҫар подразделенийӗсене унтан 1989 ҫулхи нарӑсӑн 15-мӗшӗнче кӑларчӗҫ. Пирӗн салтаксемпе офицерсемшӗн унти вӑрҫӑ тинех чарӑнчӗ. Тревога ҫук, кӗместпӗр тек ҫапӑҫӑва... Анчах сӑртлӑ-туллӑ ҫӗршыври паттӑрлӑх нихӑҫан та пирӗн асран тухмӗ, манӑҫмӗ. Вӑл паян ҫар ретне тӑракансемшӗн те ырӑ тӗслӗх пулмалла. Хальхи ҫамрӑксем пирӗн ӗҫе малалла шанчӑклӑ тӑсасса эпир шанатпӑр тата кӗтетпӗр, – шӑппӑн пӑшӑлтатрӗҫ вӑрҫӑран таврӑнайман юлташӗсене асӑнса эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан арҫынсем.

**Сӑн ӳкерчӗкре (сулахайран сылтӑмалла): малти ретре – В. Яндимиркин, А. Чакак, И. Тепеев, М. Моторкин; хыҫалти ретре – Ю. Трофимов, Н. Перов, В. Цветков, К. Петров, Н. Шишокин.**

**А. БЕЛОВ**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**

# Ринг боксерсене йышӑнма хатӗр

Спорт хыпарӗ

Совет ҫарӗсене Афганистанран кӑларнине асӑнса, интернационалист салтаксене халалласа Муркаш район администрацийӗн пуҫлӑхӗн кубокне ҫӗнсе илессишӗн ҫулталӑк каялла Муркашра пысӑк ӑмӑрту иртнӗччӗ. Бокс енӗпе иртнӗ республика шайӗнчи пӗрремӗш уҫӑ ӑмӑртӑва ун чух республикӑри боксерсем кӑна мар, Чулхула облаҫӗнчи, Ульяновск, Санкт-Петербург хулисенчи, Мари тата Мордови республикисенчи боксерсем те хутшӑннӑччӗ. Муркашри «Сывлӑх» физкультурӑпа спорт комплексӗнчи ринг ҫинче 170-е яхӑн боксер вӑй виҫрӗ ун чух.

Ӑмӑртӑвӑн пӗрремӗш кунӗнчи пӗрремӗш кӗрешӳре Муркаш боксерӗ Игорь Быков ҫӗнтерни хӑйне май лайӑх паллӑ пулчӗ пулӗ. Кайранхи кӗрешӳсенче виҫӗ кунӗнче те пирӗн яшсем техника енӗпе те, кӗрешӳсен пахалӑхӗпе те палӑрчӗҫ. Александр Никитин тата Николай Багдасарян боксерсен финалти кӗрешӗвне манма ҫук – куракансем пӗр ҫеккунтлӑх та рингран куҫ вӗҫертмерӗҫ ун чух. Кӗрешӳре хальхи вӑхӑтра Санкт-Петербург хулинче ӑсталӑха туптакан Александр Никитин ҫӗнтерчӗ. Муркаш боксерӗсен команди кубока «килте» хӑварма пултарчӗ.

Кӑҫал та «Сывлӑх» ФСК рингӗ боксерсене йышӑнӗ. Кун пирки тунти кун йӗркелӳ комитечӗ хӑйӗн пӗрремӗш ларӑвӗнче калаҫрӗ. Малтанласа палӑртнӑ тӑрӑх кӑҫал та Муркаша боксерсем чылайӑн пухӑнаҫҫӗ – 130-а яхӑн. Йӗркелӳ комитечӗн членӗсем вӗсене вырнаҫтарассипе апатлантарассине, ӑмӑртӑвӑн йӗркине сӳтсе яврӗҫ.

Черетлӗ ӑмӑртӑва февралӗн 7–9-мӗшӗсенче ирттерме палӑртнӑ. Кӑҫал вара ӑна пирӗн район 70 ҫул тултарнине те халалласҫӗ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Ертӳҫӗне пысӑк укҫа илӗртнӗ

Следстви комитетӗнчен

Хаҫатӑн малтанхи номерӗсенче Чӑваш Республикинчи «Шомикри психоневрологи интерначӗ» бюджет учрежденийӗн ертӳҫи пулнӑ ҫыннӑн саккунсӑр тӗрлӗ ӗҫӗ-хӗлӗ пирки ҫырнӑччӗ. Хальлӗхе вара Сергей Вачаев тӗлӗшпе Раҫҫей Федерацийӗн Следстви комитечӗн Чӑваш Республикинчи следстви управленийӗн Етӗрнери районсем хушшинчи пайӗ 11 уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ. Ответлӑ ӗҫчене РФ УК 159 статьян 3 пайӗнчи йӗркене (служба вырӑнӗпе усӑ курса ултавлӑ ӗҫсем ирттерни) пӑсса тӗрлӗ преступлени тунӑшӑн айӑпласҫӗ.

Следстви ҫакӑн пек пӗтӗмлетӳ тӑвать. 2010 ҫулхи сентябрь – 2012 ҫулхи май тапхӑрӗнче асӑннӑ учрежденири пациентсем валли матрац, сӗтел-пукан, тӗрлӗ тум, заколка, шӑрҫа туянма С. Вачаев учреждени кассинчен 950 пин ытла тенкӗ укҫа илнӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара вӑл кунти ответлӑ ӗҫченсене ҫӳлерех асӑннӑ тавар туяннине ӗнентерекен документ хатӗрлеме хушнӑ. Ертӳҫӗ, паллах, ҫакна ҫирӗплетнӗ. Тӗрӗссипе вара ҫак укҫа-тенкӗлӗх нимӗнле суту-илӳ те пулман. Айӑпланакан ҫын унпа хӑй пӗлнӗ пек усӑ курнӑ.

Хальлӗхе уголовлӑ ӗҫсене пӗр производствӑна пӗрлештернӗ, мӗн пур ултава ҫиеле кӑларассипе следстви вӗҫленмен, тӗпчесси-палӑртасси малалла пырать.

2013 ҫулхи майӗнче Муркаш район сучӗн приговорӗпе директор РФ УК 159 статьян 3 пайӗпе (служба вырӑнӗпе усӑ курса ултавлӑ ӗҫсем туни), РФ УК 160 статьян 4 пайӗпе ( уйрӑмах пысӑк калӑпӑшлӑ укҫа-тенкӗ тӗллевсӗр тӑкаклани), РФ УК 292 статьян 1 пайӗпе (ӗҫ вырӑнӗнчи ултав) айӑплӑ пулнине ҫирӗплетнӗ. Следствипе суд ҫакна палӑртнӑ. 2010 ҫулхи декабрь – 2011 ҫулхи январь тапхӑрӗнче Сергей Вачаев саккуна пӑсса тӗрлӗ документ ҫине алӑ пуснӑ, ӑна ӗненес пулсан асӑннӑ учрежденин административлӑ икӗ хутлӑ ҫуртӗнче юсав ӗҫӗсем иттернӗ имӗш. Ҫапла вара ун чухне ку тӗлӗшпе психоневрологи интернатне пӗр миллион ытла тенкӗлӗх сиен кӳнӗ.

2012 ҫулхи апрель–май уйӑхӗсенче пациентсем валли тӗрлӗ тавар туянассипе черетлӗ ултавлӑ шухӑш-тӗллев тытнӑ. Ку хутӗнче вӑл учреждени кассинчен 450 пин ытла тенкӗ илнӗ, укҫа каллех ертӳҫӗ аллине кӗнӗ.

Ҫапла вара ҫӳлерех асӑннӑ ӗҫсемшӗн Сергей Вачаева 5 ҫул ирӗкрен хӑтармалла тунӑ. Ҫак тапхӑра вӑл пӗтӗмӗшле режимлӑ юсану колонийӗнче ирттерӗ. Ҫавӑн пекех ӑна 500 пин тенкӗ штраф тӳлеттерме йышӑннӑ.

**И. ФЕДОТОВ,**
**следователь.**

Ҫулсем тата ҫынсем

# Ӗҫрен пӑрӑнман, килӗшӳлӗхе ҫухатман

Районӑмӑр 70 ҫул тултарас умӗн журналист ӗҫӗ-хӗлӗн черетлӗ ӗҫ кунӗнче эпӗ Шаптак Муркашра пурӑнакан саккӑрмӗш теҫеткери Марийӑпа Алексей Николаевсем патне ҫитсе килме тӗв турӑм. Шутланӑ–тунӑ. Ҫула тухмалла, анчах хаҫат редакцийӗ умӗнчех Алексей Максимовича тӗл пултӑм. 80 ҫулхи ҫирӗп арҫын – ҫапла-ҫапла, урӑхла хаклаймастӑп та – черетлӗ юбилее хатӗрленсе тӑванӗсене чӗнме тухнӑ.

– Килте юлса ӗҫсӗр ларма хӑнӑхман эпӗ. Кунашкал вӑхӑтсенче хама читлӗхри пек туятӑп – мана валли мар вӑл. Акӑ паян та хамӑн юбилей ячӗпе хӑна-вӗрле пуҫтарма шут тунӑран перекет кассинчен укҫа илес тата Муркашри тӑванӑмсене килӗсене кӗрсех йыхравлас шутпа райцентра ҫитрӗм. Ҫанталӑкӗ хитре те кӗрӳ парнеленӗ ҫӑмӑл автомашинӑна та вырӑнтан хускатмарӑм. Ман шутпа ҫын ҫӳрет пулсан – вӑл пурӑнать. Пирӗн вара пурӑнмалла-ха. Турри ҫак пурнӑҫра хамӑра панӑ пур тивӗҫе те пурнӑҫлайман тесе шутлатӑп эпӗ. Апла пулсан ӗҫӗ-пуҫӗ те пур, – мана хӑйӗнпе пӗрле ҫула йыхравласа калаҫрӗ сӑнран пӑхсан 80 ҫул пама ҫук мучи. Ӗҫре пиҫнӗ, анчах ҫулсем иртнине пӑхмасӑр хӑйӗн ҫамрӑклӑхне упраса хӑварнӑ аксакал-водительпе район ҫуралнӑ кунӗ умӗн тӗл пулни Турӑ ҫырни тесе тӗв турӑм та фотоаппаратпа блокнот илсе унпа пӗрле ҫула тухрӑм. Муркашри вӑтам шкул умӗнчи шурӑ юр пӗркенчӗкӗллӗ йывӑҫсем пире ӑнӑҫу сунса лӑпкӑн хыҫа юлса пычӗҫ.

Шаптак Муркашри Прудовая урамри 121-мӗш ҫурт умне эпир хӑвӑртах ҫитрӗмӗр. Кил умӗнче автомашинӑпа ҫаврӑнма анлӑ вырӑн пурри хуҫисем юра уҫсах тӑни пирки систерчӗ. «Ачасем, мӑнуксем, тӑвансем ҫӑмӑл автомашинӑсемпе килсен техникӑна лартмаҫаврӑнма вырӑн ҫителӗклӗ пултӑр тетпӗр. Хам та час-часах автомашинӑпа ҫула тухатӑп, – васкамасӑр калаҫать ӗҫ ветеранӗ тикӗс вырӑнпа кил карти алӑкӗ патне утнӑ май. – Тирпейлӗх вӑл килте те, урамра та, ялта та пулмалла. Ку вӑл пирӗн пурнӑҫ йӗрки. Ӑна кура пире хакласҫӗ».



Район историйӗнчен аслӑрах мӑшӑр Муркаш ене таҫтан катаран килмен. Алексей Максимович Шаптак Муркашрах ҫуралса ӳснӗ. Ашшӗ Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫинче нимӗҫ фашисчӗсемпе ҫапӑҫса ачисемпе мӑнукӗсен, тӑван ял пуласлӑхӗшӗн пуҫ хунӑ. Ҫак вӑхӑта 10 ҫул та тултарайман Элекҫейӑн вара амӑшне пулӑшма ачаллах колхоз ӗҫне кӳлӗнме тивнӗ. Ачаллах аслисемпе пӗрле тӑрса ака-суха тунӑ, ҫурлапа тырӑ вырнӑ, авӑн ҫапнӑ, выльӑх пӑхнӑ. Ҫапла хресчен пурнӑҫӗнчи пӗр ӗҫрен те ютшӑнман вӑл. Анчах ҫӗнӗ кун-ҫул ачи ҫулсем иртнӗҫемӗн пурнӑҫ ҫӗнӗлӗхӗсемпе ытларах та ытларах туслашнӑ. Уйрӑмах ӑна яла килекен ҫӗнӗ техника интереслентернӗ. Ҫулсем иртнӗҫемӗн ял каччи ҫак ӗмӗте пурнӑҫа кӗртетех. Водитель правине илсен А. Николаев 33 ҫул Муркашри «Сельхозтехника» пӗрлешӳре тӗрлӗ маркӑллӑ автомашинӑпа ӗҫлет. Ытларах инҫе ҫулсене ҫӳреме тивнӗ унӑн. Ҫапла вара вӑл хӑйӗн ӗҫ ӗмӗрӗнче Ҫӗпӗрте те, Ҫурҫӗр Кавказра та, Краснодар енче те, Румыни чиккинче тата ытти ҫӗрте те пулса курнӑ.

Ӗҫе чунӗпе парӑннӑ водитель 1957 ҫулта авланнӑ. Мӑшӑрӗпе – Хорнуй ял хӗрӗпе Марийӑпа – икӗ хӗрпе икӗ ывӑл ҫуратса пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларнӑ. Паянхи 7 мӑнук – вӗсен ҫӗнӗ тапхӑрти пурнӑҫ илемӗ. Ҫак илем никӗсӗнче ырӑ кӑмӑллӑ та юратнӑ мӑшӑрӗ тӑнине пытармарӗ кил хуҫи. Ку вара тепӗр сӑмах.

Мария мӑнакка Хорнуйӗнчи 6 ачаллӑ хресчен ҫемйинче пурнӑҫа килнӗ. 1937 ҫулхи нарӑс уйӑхӗн 27-мӗшӗнче кун ҫути курнӑ хӗр пӗрчи ялти 7 класлӑ шкултан вӗренсе тухсанах йӑмӑкӗсемпе шӑллӗне пӑхса ӳстерме пулӑшас тӗллевпе амӑшне тӗкӗ пултӑр тесе хресчен ӗҫне явӑҫнӑ. Уй-хирте ӗҫленӗ, сурӑх ферминче выльӑхсем пӑхнӑ, килти хушма хуҫалӑхра ырми-канми вӑй хунӑ.

– Ӗҫлекен ҫын пурнӑҫӗ ӗҫрех майлашӑнса пырать. Сурӑх ферминче ӗҫленӗ чух Шаптак Муркаш каччипе Элекҫипе курса калаҫрӑмӑр та пирӗн ҫулсем пӗр килчӗҫ. Ҫапла вара 1957 ҫултанпа эпир пӗр йӑвара пурӑнатпӑр. Темӗн те пулнӑ пулӗ, анчах пирӗн тӗле ырри ытларах килчӗ тесе шутлатӑп. Ҫапла вара тӑрӑшуллӑ ӗҫре хамӑр та ят ямарӑмӑр, ачамӑрсем те пит хӗретмерӗҫ, – терӗ ҫемье членӗсен пӗрлехи сӑн ӳкерчӗкӗпе паллашма чӗнсе Мария Филипповна.

Мӑнакка пурнӑҫӗнче шофер чи ҫывӑх ҫын пулнӑ тесен те йӑнӑш пулмӗ. Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫинчен ҫӗнтерӳпе таврӑннӑ ашшӗ – Филипп Михайлович – нумай ҫул тӑван ялта, Хорнуйри колхозра шоферта вӑй хунӑ. Качча кайсан та хӗрарӑмӑн шоферпах ӗмӗрлеме тивнӗ. Май килнӗ чух мӑшӑрӗпе инҫе ҫула тухса кӗнисем те пулнине пытармарӗ мӑнакка. «Мӑшӑрӑм шоферта ӗҫлесе тӗнче куртӑм тет те мана та унпа пӗрле ҫула тухкаласан мӑшӑрӑм курнин пӗр пайӗпе ҫывӑхарах паллашма май пулчӗ. Тавах куншӑн», – ӑшӑ кулӑ парнелесе пӑхрӗ Мария Филипповна сӗтел пусӗнче ларакан Филипп Михайлович ҫине.

– Хамӑр ӗҫ ӗмӗрне ирӗн-каҫӑн ӗҫре ирттертӗмӗр, пӗр ӗҫе теприпе ылмаштарсах тӑтӑмӑр. Ҫичӗ хут тар юхтарса хамӑрӑн ҫемье пурнӑҫне йӗркелерӗмӗр, ачасен пурнӑҫ ҫулне уҫрӑмӑр. Эрех ӗҫсе мухмӑр чӗртме вӑхӑт пулман ҫав пирӗн. Ӗҫре яланах яваплӑха туйнӑран мана тӑтӑшах ҫӗнӗ автомашинӑсем паратчӗҫ. Ку вара ӗҫлес хавхаланӑва ҫӗклетчӗ. Ҫавӑнпах тивӗҫлӗ канӑва тухсан та хам ӗҫленӗ предприятие кайса юлташӑмсем рейса тухса кайнине пӑхса-сӑнаса тӑраттӑм. Чӗре ҫумӗнчен темӗн татӑлса ӳкнӗн туйӑнатчӗ ҫавӑн чух. Ҫак вӑхӑтра больницӑн страхлакан кассинче 3 ҫул водительте ӗҫлеме тӳр килни ҫеҫ кӑмӑла ҫемҫетрӗ, пурнӑҫ илемне малалла тӑсрӗ. Анчах паян та руль умне лармасӑр чӑтаймастӑп. Тавах ачамсене, тавах кӗрӗве, – кӑмӑллӑн калаҫрӗ 80 ҫулхи ӗҫ ветеранӗ. – Тавах мӑшӑрӑма. Вӑл ӗҫе тиркесе тӑманни мана тӑтӑш хавхалану паратчӗ. Пирӗн ҫемьере эрех ӗҫсе ӗҫе тухманни, вӑл е ку ӗҫе тиркесе айккинелле пӑрӑнни пулман. Килӗштерсе пурӑннӑ. Ҫавӑнпа умри йывӑрлӑхсене те ҫӑмӑллӑн ҫӗнтернӗ.

Ҫӗнелсе пыракан ял сӑн-сӑпачӗпе, пурнӑҫа ҫӗр ӗҫӗнче тата халӑх хуҫалӑхӗн тӗрлӗ отраслӗнче пӗр кун сиктермесӗр ӗҫлесе ирттернӗ ветерансем епле пурӑннипе паллашрӑм ҫак кун. Ӗҫрен катара тӑманскерсен кил хуҫалӑхӗ те ялта тӗреклисен шутӗнче. Ҫакӑнпа киленсе тирпейлӗ ӑсталанӑ пӗчӗк алӑка уҫса кил хушшинчен урамалла утӑмларӑм.

77 ҫулхи Мария мӑнакка манран уйрӑлса сарайнелле сурӑхсене пӑхам-ха тесе утӑмларӗ. Элекҫи мучи ҫӑмӑл кӗреҫе илсе кил хушшине юртан тасатма тӑчӗ. Манӑн ҫӗнӗ пӗлӗшсен хушма хуҫалӑхӗнче паян сурӑхсемпе хур-кӑвакал ҫеҫ, анчах ҫу каҫа мучипе мӑнакка пурӑнакан кил-ҫурт умӗнче вуншар хурпа 30-50 индоутка пулнине ялта пурӑнакансем ырӑ ӑмсанупа пӑхнине сӑнама кӑмӑллӑ.

Пурнӑҫ йывӑр теҫҫӗ. Пулнӑ та пулӗ. Тен паян та йывӑрлӑхсем пурах. Анчах Николаевсем пурнӑҫра вӗсене сисмен. Куллен ӗҫе васканӑ. Ӗҫре вӑй хурса йывӑрлӑх та сисӗнмен.

Ӗҫчен ҫыннӑн ӗҫӗ ыттисемшӗн те телей ҫав! Пуриншӗн те вӑл ҫапла пултӑрччӗ!

**А. БЕЛОВ.**

**Сӑн ӳкерчӗкре: Алексей Максимовичпа Мария Филипповна – илемлӗ мӑшӑр.**

**Автор сӑн ӳкерчӗкӗ.**

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельных участков

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды до 49 (сорока девяти) лет из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:061901:1310, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 211526 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

***

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:092701:1118, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинкое сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

***

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:271101:132, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д.Падаккасы, для огородничества, площадью 202 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

***

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060406:123, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Заводская, для содержания и обслуживания временных зданий и сооружений (сараев), принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

***

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды до 49 (сорока девяти) лет из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:072501:1792, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, общей площадью 5551 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 4-23.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 3-10.



*Муркаш «автопромĕн» çăмăл мар тапхăрĕ. Пулĕши район центрĕнче хăçан та пулин автомашинăсен тӳлевлĕ стоянки?*

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**25 ЯНВАРЯ – ДЕНЬ ОТКРЫТЫХ ДВЕРЕЙ**

**Чебоксарский политехнический институт приглашает выпускников средних школ, их родителей и учителей на День открытых дверей, посвященный Дню российского студенчества. В программе:**

**1. Концерт студенческого актива.**

**2. Семинар «Образование: риски и возможности» для заместителей директоров и учителей (зав. кафедрой философии В.И. Семенова, начальник УМО Т.Н. Быкова). По окончании семинара выдается сертификат о повышении квалификации.**

**3. Пробное бесплатное тестирование по форме ЕГЭ – по математике, русскому языку, обществознанию и физике.**

**Место проведения: г. Чебоксары, ул. П. Лумумбы, 8, проезд до ост. "ул. Патриса Лумумбы" и «Чебоксарский трикотаж», тел.: 63-21-43, сайт www.polytech21.ru. Начало в 14.00 час.**

**«ВИКТОРИЯ – ОКНА» ИП Шишкин**
**Пластиковые окна, натяжные потолки, металлические двери, жалюзи, матрасы, эковата.**
2-10. **Скидка на все – 40%. Тел.: 8-937-955-33-00.**

Администрация Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельных долей, находящихся в общей долевой собственности, доля в праве 142.5/751 муниципального образования Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики в собственность по цене, определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади, соответствующей размеру этой земельной доли, расположенной по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, кадастровый номер 21:17:230701:1.

Заявления принимаются в течение шести месяцев с даты опубликования по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Сятракасы, ул. Победы д.1.

**Спутниковое цифровое телевидение**
**ТРИКОЛОР 200 каналов – 7500 руб.** 1-10.
**ТЕЛЕКАРТА 50 каналов – 3500 руб.**
**Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.**

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:101601:780, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельных участков, образованных в счет земельных долей. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельных участков.

Заказчиком проекта межевания является: Овчинникова Вена Ивановна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Падаккасы, ул. Центральная, д. 8.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Карзаковой М.А., номер квалификационного аттестата 21-12-49 от 20.12.2012 г. Почтовый адрес: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25. E-mail:ooozemly@rambler.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:101601:780. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, территория землепользования СПК «Оринино»: земельный участок расположен севернее д. Вурманкасы.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25, а также в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: 428000,Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, Московский проспект, д. 37.




**Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»**
* Представительство в судах по всем видам споров;
* Регистрация, ликвидация организаций, ИП;
* Подготовка исков, составление договоров;
* Сопровождение сделок с недвижимостью, в.т.ч. земельными участками: оформление в собственность, в аренду, регистрация;
* Взыскание по КАСКО и ОСАГО, дела по ДТП;
*Услуги по оценке имущества;
* Бухгалтерский и кадровый учет.
Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119.
Тел.: 62-4-43. сот. 8-903-358-84-64.
г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел.: 44-64-48.
E-mai:l vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru

# Галина Николаевна ВЯЗОВА



2014 çулхи январĕн 4-мĕшĕнче пирĕн кил-йыша каласа ăнлантарма çук йывăр хуйхă килсе çапрĕ. Çывăх çыннăмăр – хĕрĕм, мăшăр, анне, йăмăк, кирек хăçан та пулăшма хатĕр çын – Галина Николаевна Вязова синкерлĕ лару-тăрăва пула яланлăхах пирĕнтен уйрăлса кайрĕ. Вăйхал тапса тăракан ӳсĕмри, 47 çулти хастар хĕрарăмăн кунçулĕ вăхăтсăр татăлни çав тери пысăк çухату пулчĕ. Харпăр хăй ачинчен ĕмĕрлĕхе уйрăлни чи малтан амăшĕн чунчĕрине хуçать, çавăн пекех ачи-пăчин кун-çулне амантать, ыттисемшĕн те хуйхă.

Г. Н. Вязова 1966 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Тереç ялĕнче çуралнă. Пуçламăш классенчех пуçарулăхпа, хăюлăхпа палăрса тăнă, кирек епле ĕçре те вăл ăста та маттур пулнă. Мĕн пĕчĕкрен ĕç çумне çыпçăннăскер тĕрĕслĕхшĕн çуннă, вăл е ку ĕçе нихăçан та уйăрса тăман, пулăшу кирлĕ çын е ача яланах унăн тĕккине туйма пултарнă. Ку вăл ашшĕ-амăшĕ ăна тĕрĕс воспитани парса ӳстернинчен, хăй те тӳрĕ чунлă пулнинчен килет. 1983 çулта вăл ĕç ĕмĕрне пуçларĕ, хăйне тĕрлĕ должноçре тĕрĕслерĕ. Çапах та бухгалтер специальноçне ытларах кăмăлларĕ пулас. Юлашки çулсенче Муркаш район администрацийĕн ял тăрăхĕсен централизациленĕ бухгалтерийĕн тĕп бухгалтерĕнче ĕçлерĕ. Пурнăçран уйрăличчен вара «Шупашкарти троллейбус управленийĕ» муниципалитет унитарлă предприятин «Березка» санаторийĕнче бухгалтерта тимлерĕ. Унăн ĕç-хĕлне район тата республика шайĕнче çӳле хурса хакларĕç. Вăл тĕрлĕ Хисеп грамотипе Тав çырăвне, паллине тивĕçрĕ.

Галя, пĕлсемччĕ, туйсамччĕ, эсĕ пирĕнтен çав тери ир уйрăлнине ĕненме вăй-хăват та çитмест. Эсĕ çаплах пирĕн хушăмăрта пек, пĕр самантлăха та асран тухмастăн. Юлашки хут курса калаçнă сăмахусем те хăлхара янăранăн туйăнаççĕ, куçу чăр-чăр пăхни те умрах. Çук çав, йăл куллу та текех чуна çемçетмест, санăн канаш-сĕнĕвӳ те çитмест. Пирĕн куççем тăтăш шывланни те кăлăхах. Мĕншĕн шăпа çав тери синкеррĕн килсе тухрĕ-ши? Нимĕн те тăваймăн, кун-çул çырнине хирĕç каяймăн. Галя, санăн ырă ĕçӳ тата çепĕç сăнару яланах пирĕн асăмăрта пулĕ.

**Çывăх çыннисем.**

## Тав тăватпăр

Пирĕн чи çывăх çыннăмăра, мăшăра, аттене, асаттене, Çĕньял Очăкассинче пурăннă Альберт Андреевич Смирнова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕнпе пĕрле çак пысăк хуйха пайланăшăн Çатракассинчи шкул коллективне, çак шкулта 3-мĕш класра вĕренекенсен ачасен ашшĕ-амăшĕсене, Муркашри полици уйрăмĕнчи ĕçченсене, тăвансене, пускилсене, ял-йыша, пĕрле вĕреннĕ юлташĕсене, унта пынă мĕн пур çынна пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Мăшăрĕ, ачисем, кинĕ тата мăнукĕсем.**

***

**Новогодние скидки на мед цветочный, урожай 2013 года, цена – 250 руб. Тел.: 8-908-309-66-75.** 8-10.

***

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру туянатпăр.**
**Тел.: 8-987-665-02-13.** 4-4.

***

**Бурение колодцев. Колодезные кольца. Доставка. Установка. Тел.: 8-927-668-96-96.** 4-10.

***

**СТРОЙМАТЕРИАЛЫ.** Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 5-10.

***

**В КПКГ «КапитаЛ» требуется кредитный специалист, образование высшее, неоконченное высшее. Тел.: 8(8352)62-05-80.** 3-4.

***

**Требуется продавец-консультант с медицинским образованием в «Оптику Гранд», (с. Моргауши). З/п от 14000 руб., график работы 5/2, соц. пакет.**
**Тел.: 8-937-395-87-29.** 2-2.

***

**Тюкланă утă сутатăп. Катькас ялĕ.**
**Тел.: 8-919-665-04-32, 65-5-22.** 2-2.

***

**Март уйăхĕнче виççĕмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тушкасси ялĕ.**
**Тел.: 8-906-381-39-83.**

***

**Тăваткал тюкланă утă сутатăп. Чуманкасси ялĕ.**
**Тел.: 8-905-027-15-12, 8-927-868-47-47.**

***

**Продаю ВАЗ-2115 2006 года выпуска, пробег 180000 км., цвет желто-зеленый, не битый, литые диски R-14, магнитола, газ+бензин, после ремонта двигателя. Тел.: 8-965-681-32-83, 8-937-376-02-55.**

## Прогноз погоды

| | среда 22 января | | | | четверг 23 января | | | | пятница 24 января | | | | суббота 25 января | | | | воскресенье 26 января | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | **-14** | **-15** | **-13** | **-15** | **-15** | **-16** | **-14** | **-13** | **-14** | **-16** | **-15** | **-17** | **-20** | **-22** | **-21** | **-24** | **-26** | **-27** | **-23** | **-24** |
| Давление мм | **754** | **754** | 753 | 752 | 751 | 750 | 748 | 748 | 747 | 748 | 749 | 750 | 751 | 751 | 752 | 752 | **753** | **754** | **755** | **755** |
| Влажность % | 90 | 90 | 79 | 81 | 85 | 82 | 82 | 85 | 87 | 86 | 76 | 74 | 89 | 71 | 76 | 89 | 66 | 71 | 83 | 87 |
| Ветер м/сек | 1 | 1 | 2 | 2 | 2 | 4 | 5 | 4 | 5 | 7 | 7 | 5 | 4 | 3 | 3 | 2 | 1 | 1 | 0 | 2 |
| | З | Ю | С-В | В | В | В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | С | С | С | С | Ю | ШТЛ | Ю-З |
| Солнце восход / заход | | 09:03 | 17:05 | | | 09:02 | 17:07 | | | 09:00 | 17:09 | | | 08:59 | 17:11 | | | 08:57 | 17:13 | |
| Луна восход / заход | | - | 10:44 | | | 00:32 | 11:05 | | | 01:45 | 11:30 | | | 02:59 | 12:01 | | | 04:12 | 12:40 | |

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Волкова А.И.
Пичете панă 21.01.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4931.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.